*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

15 (2427) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014, нарăс, 28

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ



ШУХĂШ

## Кахалсем ăçта çуралаççĕ?

Аист çĕклесе килмен ĕнтĕ вĕсене Чăваш çĕр-шывне, хамăрах çурататтăр. Хаçат-журналта, радиопа телекурав кăларăмĕсенче те, пуçлăхсем ларусенче тухса калаçнă чух та "чăваш халăхĕ ĕçчен, хастар, маттур" тесе мухтанаççĕ. Анчах хамăра ытти халăх мĕнле хаклать-ши? Хальлĕхе, ман шутпа, кăкăра çапса мухтанмалли курăнмасть. Пачах урăхла. Халăх кунсерен кахалланса пынишĕн чан çапмалла.

...Кукашшĕпе кукамăшĕ утă тавăраççĕ. Вĕсене пулăшма пынă вун тăватă çулти мăнукĕ кĕреплине пилĕк урлă икĕ аллипе ярса тытнă та – шăхăркалать, кӳршĕри ана çинче утă тавăракан хĕр ачасене пăхса кулса тăрать. Кукашшĕ мăнукне çынсем ĕçленĕ чух шăл йĕрсе тăмалла маррине, çынпа пĕрле канмаллине икĕ хутчен аса илтĕрчĕ. Арçын ача çаплах ĕçе пуçăнманнине кура виççĕмĕшĕнче хытах хăтăрса илчĕ. Кукамăшĕ кукашшĕне хирĕçлемесĕр чăтаймарĕ:

– Ара, кантăр-иç, каникула канма янă пуль. Вăрахăн хамăрах тавăрса пĕтерĕпĕр...

...Ашшĕ Мускава ĕçлеме кайнă та – амăшĕ анкартинче пĕчченех çĕр улми кăларать. Вун пилĕк çулти ывăлĕ вара урамра ашшĕ илсе панă мотоциклпа качăччи чупать. Каçхине килĕнче çакăн пек калаçу пулса иртет:

– Толик, эсĕ уроксене турăн-и? – ыйтать выльăхсене шăварса витене хупса кĕнĕ амăшĕ.

– Математикăпа задачăна шутлама пĕлместĕп. Шутласа пар-ха, – пĕр вăтанмасăр çавăрттарса хурать ывăлĕ.

Кунĕпе çĕр улми кăларса, пуçтарса, тулли михĕ йăтса ывăннă амăшĕ задача шутлама ларать...

...Шкулсенче халĕ тĕрлĕ конкурс ытлашшипех ирттереççĕ. Ялти пĕчĕк шкулсенче лайăх вĕренекен ачасене йывăр килет. Конкурссене ялан пĕр ачасенех хутшăнтараççĕ. Тĕрĕссипе, ачисене мар, вĕрентекенсене йывăр, мĕншĕн тесен конкурс материалĕсене ачасемшĕн... вĕрентекенсем хатĕрлеççĕ. Пур шкулта та çавах. Вĕренекенсем вĕрентекен хатĕрлесе панă материалпа конкурса хутшăнаççĕ. Çакна çӳлтисем аван пĕлсе тăраççĕ, анчах никам та тĕрĕс çул çине тăрасшăн мар.

Ĕçрен писсе пыратпăр. Ĕлĕкрех халăх улăх-çаранта тар тăкса хĕл каçма утă хатĕрленĕ. Халĕ – чылайăшĕ ура тăратса эрех ĕçсе выртать. Ачасем çакна кураççĕ, çитĕннисенчен вĕренсе пыраççĕ.

Хĕвелтен маларах тăрса кăмака хутас çук, çур ял ытла ĕне усрамасть. Ĕне çук – утă хатĕрлес нуша çук. Пӳртре кăмака та çук – вăл газпа ăшăнать, вăрмана кайса вутă хатĕрлемелле мар. Çăлтан шыв йăтмалла мар, вăл пăрăх тăрăх пӳртех кĕрет. Кунсерен çăкăр пĕçерсе тертленместпĕр. Район центрне автобус çӳрет, çуран çӳресе хăшкăлмастпăр. Çăтмахра пурăнатпăр мар-и?..

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

Сочире иртнĕ XXII Олимпиада историе ĕмĕрлĕх çырăнса юлчĕ. Пирĕн спортсменсем 33 медаль – 13 ылтăн, 11 кĕмĕл, 9 бронза – çĕнсе илчĕç. Çĕнтерӳçĕсем хушшинче Чăваш Еншĕн уйрăмах хаклă хĕр те пур. Пăр çинче эрешлесе ярăнса ылтăн медаль çĕнсе илнĕ Аделина Сотникова – Улатăрта çуралса ӳснĕ Совет Союзĕн Геройĕн Александр Кочетовăн мăнукĕн хĕрĕ. Пĕчĕккĕ чухне Аделина кукамăшĕпе Улатăра килсе курнă.

Шупашкарта иртнĕ «Çĕр улми – 2014» куравра ял хуçалăх организацийĕсем, хресчен-фермер хуçалăхĕсем вăрлăхлăх 68 тонна çĕр улми сутнă.

Республикăн ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов кăçал акмалли лаптăксем 570 пин гектар (пĕлтĕрхи шайран 103,8 процент) йышăнасса палăртнă, çав шутран пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем – 276,5 пин гектар (104,6 процент), çĕр улми – 41,5 пин гектар (104,6).



**ПАЯН** кун тăршшĕ 10 сехет те 36 минут. Уйăх катăлса пырать. Сурăх тытакансене хӳтĕлекен Онисим кунĕ. Çак кун хресчен сурăх лайăх пăранлатăр тесе кĕлĕ тунă.

**ЫРАН** – Ярилле кунĕ. Хĕвел пăйăркисем хĕле пăркăчлама пуçлаççĕ. Çие юлнă хĕрарăмсем хĕвел çинче ытларах пулма тăрăшнă, ача çуратма вăй пухнă.

**ВИÇМИНЕ** – Хĕветĕр кунĕ. Çак кун мĕнле – çу та çапла пулĕ. Уйăх çутă пулни – тыр-пул лайăх пуласса.

Юр хăвăрт ирĕлсен – çу йĕпе-сапаллă пулать.
Çур пĕрремĕш кунранах ашкăнма тытăнсан – кайран улталать.
Çырмари пăр çине шыв тухсан – часах ăшă кунсем çитĕç.

ЫЙТУ – ХУРАВ

### Чие чирлет

**Иртнĕ çул чие çырли аван пулчĕ, анчах çурла уйăхĕнчех çулçи, шурăрах тĕспе витĕннĕскер, тăкăнма пуçларĕ. Мĕнле чир ерчĕ-ши?**

**Галина ИВАНОВА.**

Чиепе ытти тĕшĕллĕ йывăç-тĕме тапăнакан коккомикоз чирĕ ернĕ курăнать. Чи малтанах çулçă сиенленет, сайра-хутра – туниле çимĕçĕ. Йĕпе-сапаллă çул чир уйрăмах алхасать. Çĕртме уйăхĕнче çулçă çинче хĕрлĕ-хăмăр тĕссем курăнма пуçлаççĕ. Малтанах вĕсем вĕтĕ, кайран пысăкланса пыраççĕ.

Коккомикоз ахăрсах кайсан çулçисем вăхăтсăрах ӳкеççĕ, хунав çĕнĕрен ӳсме пуçлать. Çакă тухăçа чакарать, ӳсен-тăрана хавшатать. Чире пуçаракан кăмпа сиенленнĕ çулçă тĕртемĕсенче хĕл каçать.

Мĕн тумалла-ха? Чечеке ларса сӳннĕ хыççăнах сиенленнĕ йывăçа 1 процентлă бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Икĕ эрнерен, çавăн пекех çырлине пухса илнĕ хыççăн – тепĕр хут. Сиенленнĕ хунавпа çырлине, тăкăннă çулçа пухса çунтармалла. Бордос шĕвекĕ вырăнне ытти фунгицидпа та усă курма юрать. «Фитоспорин» биофунгицид та аван.

### Йывăçĕ çинчех çурăлать

**Хамăн груша йывăçĕпе мухтанас килет. Хитре те мăнаçлăскер, çулçисем тĕттĕм симĕс, йăлтăртатса тăраççĕ. Анчах çимĕçĕ чăх çăмарти пысăкăш пулсанах хуппи çуркаланма пуçлать, унтан çĕрет. Мĕн тумалла?**

**Раиса КИРИЛЛОВА. Кӳкеç.**

– Азот удобренийĕпе виçесĕр усă курсан йывăç çулçи çапла тĕттĕм симĕс пулакан, – терĕ пире Раççей ял хуçалăх центрĕн пай пуçлăхĕн çумĕ **Ольга БЕЛОВА.** – Ахăртнех груша тĕмне тахçан компост вырăнĕ пулнă е азот удобренийĕ тытнă çĕре лартнă. Аммиак, натри, кальци селитрисемпе, сульфат аммонийĕпе мочевинăпа апатлантарса çине-çинех шăварнă-тăр.

Апатлантарма тата шăварма пăрахăр. Май пулсан çĕре чавса тĕп тымарне касса ямалла.

Кукша чирĕ ерсен те çимĕçĕ çуралма пултарать, анчах кун пек чухне чир палли çулçăра та палăрать.

### Кăткă нушалантарать

**Иртнĕ çул ремонтатлă çĕр çырли ӳсекен вырăна кăткă иленчĕ. Бор кислоти, сахăр тата пыл хутăшĕ лартса патăм – пулăшмарĕ. «Химипе» усă курма шикленетĕп. Тен, кăткăпа кĕрешмелли урăх меслет пур?**

– Çырли пур чухне нимĕнле химипе те усă курма юрамасть. Кăткă пилеш курăкĕн (пижма), эрĕмĕн тата анис курăкĕн шăршине юратмасть. Тин татнă курăка та, типĕтнине те вĕсем пухăнакан вырăна хума юрать. Сăмсана витĕр çапакан шăршă та хăратать вĕсене. Калăпăр, йăви çине тĕтĕмленĕ селедка пуçĕ е вĕтетнĕ ыхра хуни, помидор аврипе петрушка çулçи те аван.

Хăшĕсем кăткă йăви çине вĕри кĕл сапнине е шăтăкĕсене тип çу янине те калаççĕ.

КИЛ КАРТИ

**КРОЛИК** сĕлĕ юратать. Ытти тырра – урпа, куккурус, тулă, вир, ыраш – кăшт çеç çитермелле. Чылай чухне тырра авăртмасăр лартса параççĕ. Сĕлĕсĕр пуçне ытти тине кăшт шӳтерсе илме юрать. Витамин А çитмесен ама сахал çăварлать, çурисем лайăх ӳсеймеççĕ. Кун пек чухне кишĕр, силос, утă, сĕт тата пулă çăвĕ пани аван. D витамин çитмесен рахит пуçланать, çурасен фосфорпа кали çаврăнăшĕ пăсăлать. Хĕвел çинче типĕтнĕ утă çитерсен, пулă çăвĕ ĕçтерсен çак çитменлĕхрен хăтăлма пулĕ.

Пуçласа чуптаракан кролик аçи патне хальччен çăварласа курнă амана ямалла. Аçа пурăнакан читлĕхре кăна чуптармалла.

Кролик çурине пирвайхи хут уйăх çурă тултарсан прививка тумалла.

**КАЧАКАНА** çулла виçĕ хут сумалла, хĕлле – 2 хут. Сăвакан качакана такапа пĕр витене хупмаççĕ, качака такин шăрши сĕте куçма пултарать. Выльăх тытакан витере таса та усă пулмалла. Качакана сăвиччен çиллине ăшă шывпа çумалла, ал шăллипе шăлса типĕтмелле.

Качака сĕчĕн шăрши килĕшмест-и? Апла ăна сăвиччен икĕ сехет маларах вĕтетнĕ симĕс курăк е силос памалла мар, ун вырăнне типĕ концентрат (тырă, сăсăл, турантă) пултăр. Сунă чухне пăхăр е тимĕр савăтпа усă куратăр пулсан ăна тутăхман хурçăпа е эмаль савăтпа ылмаштарăр. Маститпа чирлĕ выльăх сĕчĕ тăварлăрах тутăллă.

### Кĕреçе суйланă чух

Кил хуçалăхĕнче тĕрлĕ кĕреçе кирлĕ. Шĕвĕр вĕçлĕ кĕреçе туяннă чух çакна шута илĕр: унпа çĕр чавмалла, тепĕр чух тăм пек хытса кайнине те. Апла пулсан вăл шĕвĕр те çирĕп пулмалла. **Чылай чухне лайăх хĕртсе хытарман кĕреçене сăрласа сутаççĕ.**

Кĕреçе аври яка пулмалла. Ытла çинçи часах юрăхсăра тухĕ, хуланни – мозоль кăларĕ. **Авăр суйланă вăхăтра вăл ывăçа кĕрсе виçĕ пӳрнене – шĕвĕр, вăтам тата ятсăр – пĕрлештернине пăхаççĕ.**

САНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 28.02 | 1.03 | 2.03 | 3.03 | 4.03 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2-4 сехетре | –12 | –13 | –11 | –11 | –11 |
| | 14-16 сехетре | –5 | –5 | –5 | –5 | –5 |
| Юр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 760 | 760 | 758 | 756 | 759 |

СĔНӲ-КАНАШ

Чӳрече ани çинчен çитĕнтерекен хăяра е чечеке сăвăс тапăнсан (çулçă шурă пăнчăсемпе витĕнсен е çулçăн тӳнтер енне эрешмен карри карсан) çакнашкал шĕвек пулăшĕ: 1 литр вĕри шыва пуçлă суханăн пĕрре тăваттăмĕш пайне вакласа ямалла, 2 кун тĕттĕм вырăнта тытмалла, сăрăхтармалла. Ӳсен-тăрана пĕрĕхтермелли пулчĕ те.

# Кахалсем ӑҫта ҫураласҫӗ?

🡐1-мӗш стр.

Ӗлӗкрех ял ачисем утма та уйра е улӑхра вӗреннӗ. Алла кашӑк тытма та амӑшӗ сарса панӑ кипке ҫинче ҫӑкӑр шӑршиллӗ уйра е сӗт шӑршиллӗ улӑхра апатланнӑ чух хӑнӑхнӑ.

Чӑваш хӗрарӑмӗсем мӗншӗн халӗ ача сахал ҫуратасҫӗ-ха? Пурнӑҫ йывӑрришӗн тетӗр-и? Ҫук. Ӗлӗк укҫа та, ҫимелли те пулман – хӗрарӑм ҫич-саккӑр ача ҫуратнӑ. Ҫуратсан икӗ-виҫӗ кунран пепкине йӑтса ӗҫе васканӑ. Халӗ отпуск та, укҫа та параҫҫӗ, ҫуратакан ҫавах сахал...

Ялсенче авланман вӑтӑр-хӗрӗх ҫулсенчи "каччӑсем" йышланса пыраҫҫӗ. Ялта хӗрсем ҫуккипе сӑлтавлаҫҫӗ ҫакна: вӗсем хулана вӗренме е ӗҫлеме тухса каяҫҫӗ те таврӑнмаҫҫӗ иккен. Тӗп сӑлтавӗ вара каччисем кахаллинче. Ара, мӑшӑрлансан арҫыннӑн ҫемьешӗн яваплӑ пулмалла-ҫке, кахалланса выртма май килмӗ. Сӑнанӑ тӑрӑх – авланман каччӑсенчен чылайӑшӗ ашшӗ-амӑшӗн ӗнси ҫинче пурӑнакансем. Амӑшӗн пенсийӗпе эрех ӗҫсе-кӳпсе юлашки ҫирӗм ҫулта авланман миҫе "каччӑ" автансӑр "яла" ӗмӗрлӗх ӑсанмарӗ-ши?..

Авланнӑ пулсан вӗсенчен ытларахӑшӗ халӗ те ырӑ-сывӑ пурӑнмаллаччӗ. Арӑмӗсем иртӗхме памӗччӗҫ...

...Ял урамӗпе кунсерен хӗрӗхрен иртнӗ "каччӑ" каллӗ-маллӗ утать. Ҫак ханттар ҫирӗм ҫул ытла ӗнтӗ ниҫта та ӗҫлемест, амӑшӗн ӗнси ҫинче пурӑнать. Мӗн шырать тетӗр-ха ӑна урамра? Ӗҫ шырать тетӗр-и? Ун пек тӗллев – эрех черккине тӗл пуласси... Ун чӗрине уй-хирте хыт-хура чашкӑрса ларни те, колхоз фермисем пулнӑ ҫуртсем ишӗлни те пӗр чӗптӗм ыраттармасть...

Обществӑна хальлӗхе халӑх кахалланса пыни пӑшӑрхантармасть. Ӗҫлемесӗр вӑрласа пуйма е янттипе ӗҫсе-ҫисе савӑнма канлӗрех-ҫке...

**Валерий МУРАВЬЕВ,**
**ҫыравҫӑ.**

### ХӲТЛӖХ

## Хисеп ҫулӗ тумхахлӑ

**?** **Электроаппарат заводӗнче ӗҫлесе 50 ҫулта пенсие тухрӑм. Ҫулсеренех завода юн пухма килетчӗҫ. Эпӗ те хутшӑннӑ унта. Хӑй вӑхӑтӗнче шутласа пыман, халӗ питӗ пӗлес килет: миҫе хутчен юн панӑ-ши? «Ӗҫ ветеранӗ» ята илме 1 ҫул та 11 уйӑх ҫитмест. Сывлӑх ҫуккипе ӗҫлейместӗп. Эпӗ мӗн чухлӗ юн панине шутласа тупсан ҫавна стаж ҫумне хушма пулмасть-ши?**

**Хисеплӗ ята тивӗҫме хӗрарӑмсен 40 ҫул, арҫынсен 45 ҫул ӗҫлемелле. Анчах ҫавӑн чухлӗ стаж пухас тесен шкул пӗтернӗ-пӗтерменех ниҫта вӗренмесӗр ӗҫлеме тытӑнмалла-ҫке. Мӗншӗн ҫакна шута илмеҫҫӗ? Ытти регионта 35-40 ҫул ӗҫленипе хисеплӗ ята тивӗҫнине калаҫҫӗ. Пирӗн патра мӗншӗн ҫапла тума май ҫук-ши?**

**А. КРЫМЗОВА. Шупашкар хули.**

Хисеплӗ донар ята илес тесен хӗрӗх хутран кая мар юн памалла, утмӑлран сахал мар – плазма. Миҫе хут юн панине пӗлес тесен сирӗн **Шупашкарти юн илекен станцие (Пирогов урамӗнчи 9-мӗш ҫурт) ҫитмелле, тӗплӗнрех ҫак телефонпа ыйтса пӗлме пултаратӑр: 45-37-05.**

Федераци саккунӗпе килӗшӳллӗн юнпа унӑн компоненчӗсене панӑшӑн «Ӗҫ ветеранӗ» ята памаҫҫӗ. «СССР хисеплӗ донарӗ», «Раҫҫейӗн хисеплӗ донарӗ» ятсене тивӗҫнисене кӑҫалтан 11 728 тенкӗ параҫҫӗ. Пирӗн республикӑра ҫак укҫана 4 пин ытла ҫын илет.

### КӖСКЕН

**Хальхи вӑхӑтра республикӑри сиплев учрежденийӗсенче операци тунӑ ҫӗрте 327 медицина сестри тӑрӑшать.**

**Чӑваш Енри сывлӑх сыхлавӗн министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх – граждансене социаллӑ пулӑшу парасси ҫинчен калакан федераци саккунӗне килӗшӳллӗн республикӑна 35,9 млн тенкӗ килсе ҫитнӗ. Ку укҫапа ачасен сывлӑхне ҫирӗплетнӗ ҫӗрте усӑ курӗҫ. Ҫак тӗллевпех кӑҫал республика бюджетӗнче 46,5 млн тенкӗ пӑхса хӑварнӑ. Унсӑр пуҫне финанас министерстви муниципалитетсене 239, 2 млн тенкӗ уйӑрнӑ.**

### ЭСИР ЫЙТНӐЧЧӖ

## Шӗпӗн курӑкӗпе

**?** **Инсульт хыҫҫӑнхи ҫӗвӗсенчен хӑтӑлма шӗпӗн курӑкӗн шывӗ пулӑшать теҫҫӗ. Аптекӑран пӗр пачка шӗпӗн курӑкӗ туянтӑм та ӗнтӗ. Рецептне пӗлесчӗ.**

**Т. ВАСИЛЬЕВА. Вӑрмар поселокӗ.**



Инсульт чӑтса иртнӗ ҫыннӑн ирсерен зарядка тумалла, усӑ сывлӑшра ҫӳремелле. Пур ӗҫе те васкамасӑр, асӑрхаса, кана-кана тумалла.

Шӗпӗн курӑкӗн шывӗ: тин вӗретнӗ 1 стакан шыва 1 кашӑк чухлӗ типӗтсе вӗтетнӗ шӗпӗн курӑкӗ (чистотел) ямалла. 15 минутран сӑрӑхтармалла. Икӗ-виҫӗ эрне таран кунне 3 хут, апат умӗн, 2-шер кашӑк ӗҫмелле.

Сиплӗ бальзам: хуппинчен тасатнӑ 5 лимона тата 2,5 пуҫ ыхрана аш арманӗпе авӑртмалла, 500 мл пыл хушмалла, сулхӑн вырӑнта пӗр уйӑх тытмалла. Вӑхӑт-вӑхӑтӑн силлесе илмелле. Апат ҫийиччен ҫур сехет маларах пӗрер чей кашӑкӗ ҫимелле, тӳрех ҫӑтмалла мар, ӗмсе ҫӳремелле.

## Чӗлхе ыратать

**?** **Манӑн тахҫантанпах чӗлхе вӗҫӗпе тута хӗрри ыратаҫҫӗ. Хальччен никамран та чӗлхе ыратнине илтмен. Ҫавӑнпа ят-шывӑма ҫырмастӑп. Ял ҫыннисенчен аван мар. Тархасшӑн хурав парсамӑр.**

**Елчӗк районӗ.**

Чӗлхе ытахальтен ыратмасть. Чылай чухне ҫакӑн сӑлтавне чӗлхе шыҫҫипе (глоссит) ӑнлантараҫҫӗ. Вӑхӑтра сиплемесен чӗлхе вӗҫӗ кӑна мар, тута-ҫӑвар таранах ыратма пуҫлать. Шӑла кунне 2 хут тасатмалла, апат ҫимессерен ҫӑвара чӳхемелле. Пӑрӑҫлӑ, тӑварлӑ тата вӗри апат ҫимелле мар. Кун тӑршшӗнче ҫӑвара марганцовка, фурацилин е хлоргексидин шӗвекӗпе чӳхемелле. Вӗреме кӗнӗ 200 мл шыва 1 кашӑк салтак тӳми (ромашка) чечекӗ ямалла. Сехетрен сӑрӑхтармалла. Ӗҫме те, ҫӑвара чӳхеме те юрать унпа. Чӗрӗ ҫӗр улми сӗткенӗпе чӳхени те пулӑшма кирлӗ. Корица шывӗ те (тин вӗретнӗ 1 стакан шыва 1 чей кашӑкӗ корица) шыҫҫа чакарма, ыратнине иртерме пулӑшӗ. Анчах халӑх меслечӗсемпе пӗлмелле, пӗлмипе усӑ курмалла мар. Инфекци сӑлтавне пӗлмелле. Ҫакна тухтӑр ҫеҫ палӑртать. Чи малтанах терапевтпа стоматолог патӗнче пулмалла.

Тепӗр чухне коронка е шӑл протезӗ лартнӑ хыҫҫӑн та чӗлхе ыратать. Организм ют япалана тӳрех йышӑнасшӑн мар – вӑхӑт кирлӗ.

Иммунитет йӑшсан та ҫӑварӑн лӑймака сийӗ шыҫать (стоматит). Питӗ вӗри чей ӗҫни е чӗлхене ҫыртса илни те хур кӑтартать.

Пӗсехен щит еверлӗ парӗ начар ӗҫлесен те (гипотериоз) чӗлхе шыҫӑнса пысӑкланма пултарать.

Чӗрепе ӳпкере ырӑ мар улшӑнусем пулса иртнине чӗлхе хӗрлӗ пулнинчен пӗлме пулать. Йывӑр инфекципе е чӗрепе чирлесен те чӗлхе хӗп-хӗрлӗ. Чӗлхене кӗрен е кӑвак сӗм ҫапнӑ-и? Апла чӗрепе юн тымарӗсем, ӳпке начар.

Анеми (юнра гемоглобин сахалланни) чухне те, нерв тытӑмӗ сиенленсен те чӗлхене йывӑр килет.

Хӑварт утнӑ вӑхӑтра чӗлхе ыратни – ҫын чӗрепе юн тымарӗсен чирӗпе аптранине систерет.

## Ҫынран аван мар

**?** **Эпӗ 35-ри хӗрарӑм. Кулса-савӑнса кӑна пурӑнмалла пек. Ачасем те пур. Анчах темшӗн пит-куҫа, ал-урана, ӳт-пӗве шурӑ паллӑсем тухаҫҫӗ. Ӳт тӗсӗ улшӑнса пырать. Ула-чӑла ҫӳретӗп. Ҫавна май ҫын хушшине тухма вӑтанакан пултӑм. Хам мӗншӗн ҫапла пулнине ачамсене те ӑнлантараймастӑп. Тепӗр чух тӗнче пӗтсе килнӗнех туйӑнать. Пулӑшсамӑр, тархасшӑн. Тен вулакансем хушшинче манашкал нуша курса сывални пур. Чӑтӑмсӑррӑн кӗтетӗп.**

**Ятӑма кӑтартмастӑп. Улатӑр районӗ.**

Ӳт вырӑнӗ-вырӑнӗпе сӗт пек шуралнине тухтӑрсем **витилиго** чирӗ теҫҫӗ. Кирек миҫе ҫултисен те пулма пултарать вӑл, уйрӑмах хӗрарӑмсен тӗл пулать. Хальлӗхе медицина ҫак ҫитменлӗх мӗнпе ҫыхӑннине уҫӑмлӑн палӑртмасть. Тӗрлӗ сӑлтав шутне пӗсехе парӗн, пӳре ҫи парӗн, ар органӗсен ӗҫӗ пӑсӑлнине, инфекци чирӗсем тӳссе иртернине, шалти органсен вӑраха кайнӑ чирӗсене, вӑйлӑ стресс тӳснине, организмри веществосен ҫаврӑнӑшӗ пӑсӑлнине, шӗвӗрӗлчен пуррине тата ытти сӑлтавсене те кӗртеҫҫӗ.

Мӗн тумалла-ха? Паллах, чи малтан дерматолог патне каймалла. Вӑл ҫырса панӑ эмелсемпе сипленнипе пӗрлех килте ҫак меслетсемпе усӑ курма юрать.

**1** Хутаҫлӑ йӳҫӗ хӗрлӗ 6 пӑрӑҫ илмелле (типпи лайӑхрах). Пӑрӑҫне касмасӑрах (вакласан ӳте ҫунтарма пултарать) литр кӗленчине ямалла, ҫур литр шур эрех хушмалла. Капрон хупӑпа хупмалла, пуҫма таткипе чӗркесе 25 кунлӑха тӗттӗм вырӑна лартмалла, кунсерен силлесе илмелле. 25 кун иртсен пӑрӑҫа кӑларса пӑрахмалла. Шӗвекпе вара кунне 3 хут шурӑ вырӑнсене 5-10 минут таран сӑтӑрмалла. Унтан 30-40 минут хӗвел ҫинче пулма тӑрӑшмалла. Кашни кун сӗрӗнмелле. Хӗрлӗ пӑрӑҫ настойкине килте туса аппаланиччен аптекӑра туянсан, тен, лайӑхрах та. Кун сиктермесӗр сӗрсен шурӑ вырӑнсен икӗ эрнерен чакма пуҫланине калаҫҫӗ.

**2** Вӗретсе сивӗтнӗ ҫур стакан шывра 1 чей кашӑкӗ бура (аптекӑра сутаҫҫӗ, шурӑрах сӑрӑ тӗслӗ порошок) ирӗлтермелле, ваткӑна унпа йӗпетсе шурӑ вырӑнсене сӗрмелле.

**3** Редис вӑррине (5 г) порошок евӗр тумалла, 1 чей кашӑкӗ пан улми уксусӗпе хутӑштарса сиенленнӗ вырӑна хумалла. Пит ҫинчи вырӑнсене петрушкӑпа лимон сӗткенӗ (1:1) хутӑшӗпе сӗрмелле.

### ВУЛАКАН СӖНЕТ

## Пулӑшас килет

Хаҫатӑн иртнӗ кӑларӑмӗнче Вӑрмар районӗнче пурӑнакан Иван Васильев пӳртре ларсах алӑ шӑнни ҫинчен ҫырнӑччӗ. Эпӗ те пӗр вӑхӑт ал-ура сӑлтавсӑрах сивӗ пулнипе аптраттӑм. Анчах ҫакна ирттерсе ятӑм. Темле журналта пӗр микробиолог статйипе паллашрӑм. Ятне-шывне ас тумастӑп халӗ, анчах вӑл ҫак пӑтӑрмах юн тымарӗсемпе ҫыхӑннине палӑртнӑччӗ. Алурари юн ҫаврӑнӑшне лайӑхлатма ҫакнашкал рецепт сӗннӗччӗ: тасатман (нерафинированное) 30 мл тип ҫӑва ҫавӑн чухлех илнӗ портвейнпа е кагорпа хутӑштармалла. Шыв пӑсӗпе 40 градус таран ӑшӑтмалла, кӗленчене ярса 2-3 минут силлемелле. Тӳрех ӗҫсе ямалла (апатчен 20 минут маларах). Унтан ҫак схемӑпа сывалмалла: 1 ҫеккунт сывласа илмелле, 3 ҫеккунт – сывласа кӑлармалла, 3 ҫеккунт – тӑхтамалла.

Юн ҫаврӑнӑшӗ лайӑхлантӑр тесен ҫавӑн пекех кунсерен хул-ҫурӑма хускатмалла, чи лайӑххи – хӑвӑрт утни.

**Елизавета ПЕТРОВА.**
**Ҫӗрпӳ районӗ.**

### СИППЕ КАЙТӐР

## Мӑйӑрпа спирт хутӑшӗпе

Пӗверти чулсене кӑларма ҫакнашкал меслет пулӑшӗ: 1 кило кедр мӑйӑрне хуппипех аш арманӗпе темиҫе хут авӑртмалла, 500 мл медицина спирчӗ хушмалла. Уйрӑм савӑта 1 л шывпа 1 кг сахӑр ярса йӑваш ҫулӑм ҫинче сироп вӗретмелле. Сивӗтмелле, сӑрӑхтармалла, спиртпа мӑйӑр хутӑшӗпе пӗрлештермелле. Унтан 3 литрлӑ кӗленчене ярса 15 кунлӑха тӗттӗм вырӑна лартмалла, вӑхӑт-вӑхӑтӑн пӑтратса тӑмалла. Мӑйӑр хутӑшне апат хыҫҫӑн пӗрер чей кашӑкӗ ӗҫмелле. Пӗр тапхӑр сипленме 3 кг мӑйӑр кирлӗ.

## Ура шӑнать-и?

Ал-ура тӑтӑшах шӑнни юн тымарӗсем тасамарланса ҫитнипе ҫыхӑннӑ. Ҫак хутӑш юн тымарӗсене тасатма пулӑшӗ.

Теркӑланӑ 200 г хӗрен тымарӗ, нимӗрленӗ 200 г аҫтӑрхан мӑйӑрӗ, 200 г пыл хутӑштармалла. Ҫакна кунне 2-3 хут пӗрер кашӑк ҫимелле, симӗс чейпе сыпса ямалла. Ҫуркуннепе кӗркунне сипленсен аванрах.



### ШУТА ИЛМЕ

**Иммунитета ҫирӗплетме.** Пан улми теркӑламалла, пӗрер чей кашӑкӗ иҫӗм ҫырли, курага, хура слива (чернослив), пӗрер апат кашӑкӗ вӗтетнӗ аҫтӑрхан мӑйӑрӗ, пыл, ҫур лимонран сӑрӑхтарса кӑларнӑ сӗткен, шӳтернӗ сӗлӗ хывӑхӗ (4 кашӑк шыва 1 кашӑк сӗлӗ хӑрпӑкӗ ярса 30-40 минут тытмалла) хушса пӑтратмалла. Ҫак хутӑша ҫурмалла туса ирпе-каҫпа ҫимелле. Кунсерен ҫакнашкал тутлӑ апат ҫисен грипп тата ытти чир-чӗр ҫулӑхаймӗ.

**Мастопатирен.** Купӑста ҫулҫи ҫине хӗрлӗ кӑшманпа пыл (3:1) сӗрсе кӑкӑр ҫине хумалла.

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*

## КĔСКЕН

**Чăваш Енре халăха цифра телекуравĕн ыйтăвĕсемпе консультаци пулăшăвĕ паракан центр уçăлнă. Çавăн пекех DVB-T2 стандартлă эфир цифра телекуравне тест режимĕпе хута янă. Цифра сечĕпе çыхăнмалли ыйтусене «хĕрӳ лини» телефонĕпе (8-800-220-20-02) шăнкăравласа пĕлме пулать, ртрс.рф порталта та кирлĕ информаци тупма май килĕ.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Пулă катлечĕ

**Шăмминчен уйăрнă 800 г пулă, 1 стакан пĕçернĕ рис, 1 кашăк услам çу, 1 чей кашăкĕ 9 процентлă уксус, тăвар, пăрăç, 1 стакан шыв, 2 кашăк хăйма, 1 чей кашăкĕ горчица, пусăă сухан.**

Пулăпа риса аш арманĕпе авăртмалла, ирĕлтернĕ услам çу, уксус, тăвар, пăрăç хушса çăрмалла. Пысăках мар çаврашкасем туса тарăн çатмана хумалла, ун çине вĕри шыва ярса пăтратнă хăймапа горчица хутăшне ямалла, вĕтетнĕ сухан сапмалла, хупласа 20-30 минут пăшăхламалла.

### «Кишĕр» салат

**200 г пĕçернĕ чăх какайĕ, 3 çĕр улми, 3 кишĕр, 2 çăмарта, 300 г кăмпа, пусăă 2 сухан, тип çу, майонез.**

Чăх какайне турамалла. Пĕçернĕ çĕр улмине, çăмартана, кишĕре теркăпа хырмалла. Кăмпапа вĕтетнĕ сухана тип çупа ăшаламалла. Салата турилкке çине кишĕр евĕр туса сийĕн-сийĕн хумалла, кашни сий хыççăн майонез сĕрмелле: çĕр улми, сухпа кăмпа, чăх ашĕ, çăмарта, кишĕр.

Пекин купăстинчен кишĕр «çулçине» тума юрать.

### Сывлăх салачĕ

**500 г купăста, 2 пан улми, 1 апельсин, 100 г аçтăрхан мăйăрĕ, 1 чей кашăкĕ сахăр, тăвар, 1 кашăк лимон сĕткенĕ, тип çу, ешĕл çимĕç.**

Туранă купăстана вĕтетнĕ пан улмипе, апельсинпа, мăйăрпа хутăштармалла. Сахăр, тăвар, лимон сĕткенĕ, тип çу хушмалла. Илемлĕ савăта хурса ешĕл çимĕçпе илемлетмелле.

## КАЛАÇĂВА ТĂССА

### Ялĕпе те тăххăрăн çеç

Валерий Муравьевăн «Сĕртен те, ĕçрен те писрĕмĕр-ши?» статйи (5 №, кăрлач, 24) пичетленсе тухнăччĕ. Иртнĕ пурнăçа çав тери тĕрĕс сăнласа панă-çке. Эпĕ вăрçăччен çуралнă. Мĕн курни-тӳсни пĕтĕмпех куç умĕнче. Мĕнле чăтнă-ши çав вăхăтри халăх? Пĕчĕккисем те пысăккисемпе пĕр тан ĕçленĕ-çке.

Халĕ чылайăшĕ ĕçке ярăннă. Ĕçлесе килеççĕ те Мускавран – пуçланать сапантуй. Эпĕ урамĕпе те пĕртен пĕр ватă тăрса юлтăм. Кунта çуралса ӳсĕр ирттерекенсем ялĕпе те тăххăрăн çеç тăрса юлтăмăр. Ыттисем пурте унтан-кунтан пуçтарăннисем. Çаплипех пурăнатпăр. Сивĕнтĕмĕр ĕçрен. Ваттисен – вăй çук, çамрăксен пилĕк авмасăрах лайăх пурăнас килет.

**Алевтина ДМИТРИЕВА.**
**Канаш районĕ, Шуркасси ялĕ.**

***Çын патĕнче шӳрпе çисен килте хуплу хатĕрле.***

***Хăна килсен аш пиçет, аш пиçмесен пит пиçет.*** *(Ваттисен сăмахĕ).*

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

**?** **Вырăс патшалăхне кам нумайрах ертсе пынă-ши?**

**Владимир ВОЛКОВ. Елчĕк районĕ, Аслă Елчĕк.**

Пĕтĕм Руçăн аслă князĕ III Василий 1533 çулта вилнĕ, хăйĕн ĕçне малалла тăсма ывăлне Ивана хăварнă. Ун чухне Иван виçĕ çулта çеç пулнă, çавăнпа ертӳçĕ тивĕçне амăшĕ Елена Глинская туса пынă. Хăй виличчен, пилĕк çул, туртнă вăл çак лава. Унтан влаçа (1538-1547) боярсем ярса илнĕ.

1547 çулта Иван Васильевич, 16 çул тултарсан, Пĕтĕм Руçăн аслă князĕ тата патши пулса тăрать.

Кĕскен каласан – IV Иван Васильевич (халăхра ăна Иван Грозный тенĕ) патшара чи нумай çул ларни. Историксем вăл ертсе пынă çулсене çапла палăртаççĕ: **1547-1574, 1576-1584.** Титулĕсене пăхса çапла уйăраççĕ: 1533-1547 – Пĕтĕм Руçăн тата Мускавăн аслă князĕ; 1547-1574 тата 1576 -1584 – Пĕтĕм Руçăн пĕрремĕш патши, 1574-1576 – Мускав князĕ.

**?** **Ирсерен пăтă çимелле тесе çыратăр. Анчах мĕн витаминĕ пултăр-ха унра?**

Пăтăра, уйрăмах тĕрĕс пĕçернинче, витамин нумай. Ку вăл – В ушкăнри витаминсем (аш-какайпа пулăра пурри). Специалистсем пĕр хут çеç авăртнă тырăран хатĕрленĕ пăтă пушшех те усăллă пулни не палăртаççĕ.

Шăтарнă тулăра çусене ирĕлтерекен Е витамин та пур. Вăл юн тымарне хӳтĕлекен чи вăйлă антиоксидант шутне кĕрет.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## «ТЕРМИНАЛПА» ÇУРТ ТĂВАТПĂР

**2-мĕш канаш**

### Валюта çирĕпленет пулин те...

Реклама

Çулталăк пуçламăшĕ доллар тата евро тĕлĕшпе тенкĕ тăруках "çăмăлланнипе" асра юлать-тĕр. Çак лару-тăрупа усă курма, хăйсен тенкисене долларпа улăштарма (паллах, пĕр 8% упраса хăварнă пулсан аванччĕ) ĕлкĕрнисем нумайăн мар. Малтан ăна-кăна тавçăрса илеймен, кайран вара хыпăнса ӳкни те кăлăхах. Çавăнпа никамах та пăшăрханмарĕ пуль, мĕншĕн тесен экономикăшăн пĕтĕмĕшле илсен çак пулăмăн усси те пур.

Калăпăр: маларах илнĕ кредитсем валюта çине куçарсан йӳнелеççĕ, çĕр-шыври тавар туса кăларакансем (чикĕ леш енчисем) тĕлĕшпе конкурентлăрах пулаççĕ. Инфляци процесĕсене те çак лару-тăру пысăк витĕм кӳмĕ. Чăн та, энергоносительсен тарифĕсем хальхи шайрах юлсан. Ку енĕпе вара шанăç пур – вĕсене тĕрĕслесе тăрассине тинех хĕрарăма шанса пама палăртаççĕ вĕт.

Ку сăмах май пултăр. Пайăр темăсене илес тĕк – унта ĕç-пуç тĕрлĕрен... Кăçал хăйсен çуртне çĕклеме палăртнă, çакăн валли кирлĕ чухлĕ укçа уйăрса хунă çынсене, паллах, чи малтанах стройматериалсен хакĕсем шухăшлаттараççĕ: вĕсем хăçан тата мĕн чухлĕ ӳсме пултарĕç, çурт çĕкленĕ чухнехи тĕп тăкаксене паян мĕн никĕслет тата ыт.те? Тепĕр тесен "Терминалпа" çурт тăватпăр" рубрика тĕллевĕ шăпах çакă – ку енĕпе профессионалсен шухăшĕпе паллаштарасси. Вĕсен канашĕсем тĕрĕс йышăну тума пулăшасса шанатпăр.

Вăрттăнлăх мар, стена çĕклемелли строительство материалĕсен, уйрăмах кирпĕч тата газобетон хакĕсем строительство тапхăрĕ пуçланиччен те (çу уйăхĕн варриччен), вăл хĕрсе çитнĕ вăхăтра та (утă уйăхĕнче) ӳсеççĕ – яланах çапла пулнă. Çулла материалсен дефицичĕ хаксене пушшех хăпартать, çакăнпа заводсем усă курма тăрăшаççĕ – хăймине сĕресшĕн. Апла пулин те 2014 çул урăхларах йĕркеленет: хакланасси маларах пуçланĕ – пуш уйăхĕнчех. Çакă долларпа евро тенкĕ тĕлĕшпе çирĕпленнипе сăлтавланать. Урăхла каласан, производствăра валютăпа виçекен тăкаксем пулчĕç тĕк тенкĕпе шутласан вĕсем унччченхинчен пысăкрах пулĕç. Юлашки вăхăтра рынока ют çĕр-шывсенчен кӳнĕ оборудованипе ĕçлекен заводсем тухрĕç. Эппин, производствăра та тивĕçлĕ чĕр тавар кирлĕ – импорт сăрăсем, пигментсем тата ыт.те. Оборудование пăхса тăрасси те, саппас пайсем туянасси те – валютăпа. Çакă производствăри тăкака ӳстерет.

Заводсем хальлĕхе тĕпрен илсен склад валли ĕçленине, хăй хаклăха шутланине тĕпе хурсан пуш уйăхĕнче суту-илӳ пуçланнă май хаксем пысăкрах пуласси куç кĕрет. Малтанхи кунсенче хаксене тӳрлеткелеççĕ-ха – ӳсĕм тĕрлĕ пулĕ, анчах, тепĕр хут палăртатпăр, хăймине сĕрме васкаççĕ – ку тĕллеве никам та пăрахăçламан.

Мĕн тумалла? – ĕмĕрхи ыйту. "Терминал" суту-илӳ комплексĕн Алькешри тĕп базин территорийĕнче тата республикăн тĕрлĕ районĕнчи пилĕк базинче кирпĕчпе газобетонăн пысăк саппасĕсене хатĕрлесе хуни çурт-йĕр тăвакансене укçа-тенке чылай перекетлес тĕллевпе вăхăтра йышăну тума май парать. Çавăнпа та пирĕн ансат сĕнĕве шута илни вырăнлă: ЙӲНĔПЕ ТУЯН ТА – ТӲЛЕВСĔРЕХ УПРА!

**"Терминал" ТК базисен Чăваш Ен территорийĕнчи адресĕсем:**

**Шупашкар хули, Канаш çулĕ, 7/1; т. 8(8352) 30-55-15;**

**Çĕнĕ Шупашкар хули, Промышленноç урамĕ, 41А; т. 8(8352) 73-81-04;**

**Етĕрне хули, Сад урамĕ, 19А çурт; т. 8(83547) 2-21-08;**

**Патăрьел ялĕ, Уй урамĕ (АБЗ территорийĕ); т. 89871206685;**

**Çĕмĕрле хули, Б.Хмельницкий урамĕ, 71 çурт; т. 89279948851;**

**Улатăр хули, Çĕнтерĕве 40 çул урам, 83 çурт; т. 8(8353) 6-14-35.**

**Сире "Терминал" суту-илӳ комплексĕнче çак адреспа кĕтетпĕр: Шупашкар хули, Канаш çулĕ, 7/1 çурт, Алькеш, "Терминал" ТК; тел. 8(8352) 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.**



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. Грабли, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.



## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 3-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.30-18.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-17.00 Марафон: дни национального радио в городах и районах республики (к 5-летию Национального радио Чувашии). (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! ( хид-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, пуш уйăхĕн 5-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30,10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Çĕр Сум. (12+) 11.30-12.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (6+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 22.30-23.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.30-15.00, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 7-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиобиблиотека. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 10.10-10.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.10-9.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 9.10-10.00 Театральный абонемент. (12+) 10.30-11.00 Чăваш Ен - çулсем тата çынсем. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Çичĕ юрă. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Присягая Родине. (12+) 10.30-11.00, 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Хурал пӳрчĕ. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 9-мĕшĕ**

6.05-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-7.30, 9.05-9.30,18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 9.30-10.00 Тема дня. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.05-17.00 Шурăмпуç. (12+) 17.05-18.00 Неформат. (12+) 18.30-19.00 Хурал пӳрчĕ. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

